# «Кĕмĕл ĕмĕр» куракансене кĕтет

**Чăваш наци библиотекинче 2002 çултанпа «Кĕмĕл ĕмĕр» (Серебряный век) картинăсен галерейи ĕçлет. Çак кĕске вăхăтра вăл Шупашкарти кăсăклă ӳнер центрĕсен шутне кĕме пултарни чăннипех савăнтарать. Ара, кунта çĕр-шыв, тĕнче сумне çĕнсе илнĕ художниксен ĕçĕсене курма пулать-çке-ха. Куравĕсене те тĕрлĕ юхăма тĕпе хурса ирттереççĕ – реализмпа символизмран пуçласа авангардизмпа экспрессионизм, концептуализмпа постмодернизм таранах.**

Библиотекăри паха текст материалне (30 ытла ӳнерçĕн биографийĕ) 250 ытла картина пурри тивĕçлипех пуянлатать. Кирлĕ информацие ширав тытăмĕ туххăмрах темăсемпе кăларса парать: галерейăна никĕслени, куравсем йĕркелени (персоналлă, тематикăллă), фото-, видеоматериалсем, пичетленнĕ ĕçсемпе статьясен библиографийĕ. Ӳнер искусствин куравĕсене йĕркелесси те йăлана кĕнĕ ĕнтĕ.

«Кĕмĕл ĕмĕр» галерейăна халалланă пĕрремĕш мультимеди кăларăмне пилĕк çул хушши пухнă (2002–2007) материалсем кĕнĕ. Ăна хатĕрлекенĕ – искусство литературин уйрăмĕн нотăпа музыка пайĕн ертӳçи Вера Архипова. Кăларăмпа паллашсан галерейăн ĕçĕ-хĕлĕ мĕн тери нумай енлĕ пулни яр уççăнах курăнать: регионти социаллă пĕлтерĕшлĕ проектсене хутшăнни, вернисажсенче куракана тĕлĕнтернĕ стильсемпе юхăмсен йышĕ...

Юлашки çулсене илсессĕн те, кăсăкли сахал мар. 2010 çулта, тĕслĕхрен, Владимир Шуркин картинисен «Çурçĕр манăн чунра» (Север в моей душе), Сергей Журавлев сăн ӳкерчĕкĕсен «Тăхтасам, самант, эсĕ – илемлĕ!» (Остановись, мгновение, ты – прекрасно!) куравĕсем иртнĕ. Александр Агатеевăн çӳл тӳпере тунă сăн ӳкерчĕкĕсем «Вĕçен кайăк куçĕпе» (Глазами птиц) экспозицире вырăн тупнă. Андрей Хромов куракансен умне авалхи вырăс хулисенчи чиркӳсемпе мăнастирсене сăнланă фотоӳкерчĕксемпе тухнă. Уйрăм пая Шупашкарти Виç-ипостаçлĕ Таса Турă мăнастирне тата унăн сăвaплă вырăнĕсемпе япалисене халалланă. Галерейăра çавăн пекех В.Агаковăн «Мускаври çӳревсем» (Прогулки по Москве), Акцыновсен «Илем тыткăнĕнче» (В плену у красоты), В.Гришинăн «Кĕркуннехи шуçăмсем тата театр» (Осенние рассветы и театр) вернисажсем, Рыбниковăн «Юрă-кĕвĕ тĕнчинче» (В мире музыки) кĕнекесен куравĕн обзорĕ, тĕрлĕ кăларăм презентацийĕсем иртнĕ.

2011 çулта та галерейăра халăх йышлă пулнă. Анатолий Данилов, Эльвира Клементьева, Николай Егоров, Нина Алимасова, Венера Сандомирова ӳнерçĕсен произведенийĕсене хак панă çынсем.

«Кĕмĕл ĕмĕр» галерейăн тĕп хуламăрăн культура пурнăçĕнчи вырăнĕ пысăк. Искусство литературин уйрăмĕн заведующийĕ Лариса Скворцова тата асăннă пайăн нотăпа музыка секторĕн ертӳçи Вера Архипова тимленипех ĕнтĕ вулакан-куракан Илем тĕнчине туртăнать, çамрăк художниксем вара хăйсен аудиторине тупаççĕ. Ку вара – чи пахи.

***Людмила КУТЬИНА.***



**Страницăна Ольга ИВАНОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.**